26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 ИЮНЬ 19 ШАМАТКУН 126(6363) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Районри пичетĕн паянхи задачисем

Парти Обкомĕн çак кунсенче пулса иртнĕ XV-мĕш пленумĕ вăрçă вăхăтĕнчи вăйлă тырпулпăн, йышлă та тухăçлă выльăх-чĕрлĕхшĕн кĕрешес ĕçре республикăри партипе совет органĕсене, колхозсемпе МТС-сене анлă программа палăртса пачĕ. Пленум решенийĕсем пĕтĕмĕшпех Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕнчен тухса тăраççĕ.

Районсенчи хаçатсен паянхи задачи — çулпуçăн историллĕ приказне, Обком пленумĕн ялхуçалăх ыйтăвĕсемпе йышăннă решенийĕсене пурнăçа кĕртме мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене мобилизацилесси пулса тăрать. Çакăн пирки пленум республикăри агитациллĕ-массăллă ĕçе малалла вăйлатса пырасси çинчен йышăннă решенире вите́млĕн калаçа хăварнă.

Колхозниксемпе колхозницăсем умне халĕ пĕр вăхăтрах нумай тата пысăк та ответлă ĕçсем килсе тухрĕç. Ăнăçлă акса хăварнă тырпула лайăх пăхса çитĕнтермелле, çĕртме тумалла, утă çулмалла, силос хывмалла, тырпул турттарма çулсене те юсамалла. Пурне те вăхăтра, тирпейлĕн туса ĕлкĕртес пулать.

Районри хаçатсем колхозсемпе сывăхра тăнă пирки, вĕсен организаторла вырăнĕ питех те пысăк. Районри хаçатăн колхоз пурнăçне шала кĕмелле, колхозри кашни ĕçпе интересленмелле, колхоз председателĕн, бригадирăн, колхозникăн чи çывăх юлташĕ, пулăшаканĕ пулмалла. Ĕç мĕнле пынине районри хаçат аякран кăна сăнаса тăрать пулсан, кун пек хаçатăн вара колхозниксем умĕнче хисеп çук. Хисепе тухас тесен, çине пăрса ĕçлемелле.

[illegible]

Сăмахран, Ишлей, Октябрьски, Первомайски, Вăрмар, Тăвай [illegible]

[illegible] «Коммунизм» хаçат (редакторĕ В. Давыдов) майăн 27-мĕшĕнчи номерĕ [illegible]

[illegible] «Колхоз пурнăçĕ» хаçачĕ (редакторĕ М. Марков) «Агрономсен [illegible]

[illegible]

Паян кирлĕ ыйтусене сутатса пырас тĕлĕшпе Калинино районĕнчи «Коммунизм ялавĕ» хаçат (редакторĕ Е. Воробьев) ытти сенчен кăшт маларах тăрать. Хаçат çум çумлас, ирхи çĕртме тăвас, машинăсене уборкăна хатĕрлес пирки умстатьясем, уйрăм материалсем панă. Анчах çав вăхăтрах хаçат редакцине çураки вăхăтĕнчи йăнăшсем пирки асăрхаттарса хăвармалла: Калинино районĕнчи колхозсем ĕç хисепĕ хыççăн хăваласа, ака пахалăхĕ çинчен манса кайнă пулнă. Хаçат çав ситменлĕхе вăхăтра тăрă шыв çине кăлармарĕ. Çав йăнăша уборка вăхăтĕнче тумалла мар.

Асăннă ситменлĕхсем ытти хăшпĕр хаçатсене те пырса тивеççĕ. Районсенчи чылай хаçатсем халĕ ВКП(б) Обкомĕн XV-мĕш пленумĕн решенийĕсене халăха ăнлантарса пама, колхозниксемпе колхозницăсене çав решенисене пурнăçа кĕртнĕ çĕре мобилизацилеме кирлĕ пек тытăнман-ха.

Партин Центральный Комитечĕ парти райкомĕсене хăйсен хаçачĕсене куллен ертсе, пулăшса пыма кирли çинчен кăтартса панăне хăшпĕр райкомсем паянхи кунченех пурнăçа кĕртмеççĕ. Çавăн пек районсенчи хаçатсем вара парторганизаци пурнăçĕнчен, пĕтĕм район пурнăçĕнчен аякра тăраççĕ. Райкомăн хăйĕн хаçатне массăсен чăн-чăн организаторĕ вырăнне хурса, унпала куллен ĕçре усă курмалла.

Районри хаçатсен халĕхи вăхăтра колхозсемпе МТС-сенче уборкăна хатĕрленес, çĕртме тăвас, çум çумлас, утă çулас, силос хывас ĕçсем мĕнле пынине куллен сутатса тăмалла. Кашни колхозра çирĕп ĕç дисциплини тăвас [illegible]

[illegible]

Хаçатра сутатса пымалли ĕçсем [illegible]

[illegible]

Районри пичетĕн работникĕсен [illegible]

А. М. Горький ятне асăнса

Мускав, [illegible] А. М. Горький вилнĕренпе 7 çул тултарнине асăнса [illegible]

Чайковский ячĕпе тăракан концерт залĕнче июнĕн 18-мĕшĕнче [illegible]

Мускаври Горький ячĕпе тăракан художественнăй театра июнĕн 18-мĕшĕнче 197-мĕш хут «Враги» ятлă пьесăна лартаççĕ. [illegible] СССР Халăх артисчĕсем В. Качалов, О. Книппер-Чехова, М. Тарханов, А. Тарасова, Н. Хмелев тата республикăн тава тивĕçлĕ артисчĕ А. Грибов выляççĕ.

Ленинградра А. М. Горький [illegible]

Салтыков-Щедрин ячĕпе тăракан [illegible] библиотека [illegible] К. П. Пятницкий [illegible] (ТАСС).

Фронтовиксен ачисем валли стипендисем

Чылай хулисенче, [illegible] Иркутск, Черемхово, Усолье-Сибирское хулисенче [illegible] 4.000 стипенди [illegible] 75 тенкĕ [illegible] (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июнĕн 17-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Июнĕн 17-мĕшĕнче фронтра паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Июнĕн 16-мĕшĕнче пирĕн авиаци часĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен войскисемпе грузсем турттарса пыракан 20 автомашининчен кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, 3 артиллери батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 4 складне тата горючи складне сирпĕнтерсе янă, темиçе чугунçул эшелонне çĕмĕрнĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн подразделенисем нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене пĕр рота таран пĕтерсе тăкнă. Пĕр çаçăн артиллерисчĕсем фронт линийĕнчен сывăхра тăракан чугунçул станцине сасартăк вăйлăн персе илнĕ. Пирĕн артиллери 6 вагона тата пĕр паровоза çĕмĕрнĕ.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçура тăшманăн 2 самолетне персе ÿкернĕ. Нимĕç летчикĕсене тыткăна илнĕ.

* * *

Мценскран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тăшман хăйĕн нумаях пулмасть çухатнă позицийĕсене çаплах каялла таварма хăтланать, çапăçава çĕнĕ подразделенисем кĕрте-кĕрте ярать. Нимĕçсем кункаçа икĕ хутчен атакăланă, анчах вĕсене каялла ывăтса янă, вĕсем вара урăх активлăх кăтартман. Çав участокри çапăçусенче тăшман сынсемпе техника тĕлĕшĕнчен йывăр çухатусем тÿснĕ.

* * *

Çакăн пек пĕлтерÿ илнĕ: пирĕн авиаци Могилев чугунçул узелĕ çине бомбăсем пăрахнипе пула Днепр шывĕ урлă хывнă кĕпер ишĕлсе аннă, чугунçул составĕсем нумай çĕмĕрлнĕ тата боеприпассен 3 пысăк складĕ сирпĕнсе кайнă. Темиçе çĕр нимĕç салтакĕпе офицерĕ вилнĕ. Бомба пырса лекнипе çĕмĕрĕлнĕ пĕр бомбоубежищĕре кăна гитлеровецсен пысăк ушкăнĕ пĕтнĕ.

* * *

Белгород районĕнче нимĕç пехотин батальонĕ старши лейтенант Глобец юлташăн подразделенийĕ хÿтĕлекен высотана тытса илме хăтланнă. Тăшман пирĕннинчен йышлăрах пулнă пулсан та, пирĕн боецсем гитлеровецсен атакине сирсе янă. Çапăçура 120 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, 8 пулемет, 70 винтовка тата ытти хĕçпăшалсем тытса илнĕ.

* * *

Волхов фронтĕнчи пĕр участокра тăшман, пирĕн оборона сооруженийĕсене атакăласа, тытса илме хăтланнă. Минометсенчен харăссăн персе тата пăшалсемпе пулеметсенчен персе, нимĕçсене каялла хăваласа янă. Пирĕн позицисем умĕнче гитлеровецсен 150 виллине çити выртса юлнă.

* * *

Карели фронтĕнче белофинсен отрячĕ артиллери вăйлăн персе тăнă хыççăн Вишняков юлташ ертсе пыракан подразделени позицийĕсене атакăланă. Хаяр çапăçура пирĕн боецсем тăшманăн 40 салтакĕне офицерне вĕлернĕ.

Тăшман самолечĕсен ушкăнĕ пĕр чугунçул станцине тапăнма хăтланнă. Пирĕн истребительсем тăшмана станци патне яман. Сывлăшри çапăçура 5 нимĕç самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Киев облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ хирĕç нимĕçсем пысăк карательнăй экспедици янă. Гитлеровецсем партизансене çавăрса илме хăтланнисем путланса ларнă. Патриотсем темиçе кун хушшинче тăшмана засадăсенчен персе йăлтах халран янă, унтан вара хăйсен пĕтĕм вăйĕпе карательсене сасартăк тапăннă та пĕтĕмĕшпех аркатса тăкнă. Çав çапăçусенче тăшманăн 600 салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ. Противотанковăй пăшалсемпе персе, 2 танка çунтарса янă тата пĕр нимĕç самолетне персе ÿкернĕ. Партизансем 7 автомашина, 2 мотоцикл, радиостанци, 17 пулемет, винтовкăсемпе минăсем нумай тата темиçе вунпар пин патрон тытса илнĕ. Киев облаçĕнчи партизансен пĕр ушкăнĕ нимĕçсен чугунçул эшелонне сирпĕнтерсе янă. Паровозпа 18 вагон çÿлĕ дамба çинчен аялалла сирпĕннĕ.

* * *

Нимĕçсен 167-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен Хĕрлĕ Çар енне куçнă салтак Вильгельм К. çапла каласа панă: «Офицерсене сăнаса эп çакна асăрхарăм: вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем иккĕленеççĕ. Вĕсем пĕрре çапла, тепре йăлтах урăхла калаççĕ. Пĕрре: вырăссем питĕ вăйлă, питĕ хăрушă тăшман, тесе ĕнентереççĕ, пире ĕçсем питĕ начарланса каясса кĕтсе илме хатĕр тăма чĕнеççĕ, тепре йăлтах урăхла: вырăссен хĕçпăшалсем çук, çавăнпа вĕсенчен хăрама кирлĕ мар, тесе ĕнентерме тытăнаççĕ. Салтаксенчен нумайĕшне вăрçă йăлăхтарса çитерчĕ. Нумайĕшне Германие çĕнтереççех тенĕ шухăш аптăрататъ».

* * *

Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче тата Çурçĕр Африкăра Итали войскисене аркатса тăкнине пула Италире фашизма хирĕçле тата вăрçа хирĕçле шухăш-кăмăлсем вăйлăрах ÿсме пуçланă. Итальянецсен Россияран таврăннă войско юлашкийĕсене хĕçпăшалсăрлатнă та поражени тÿсес шухăшкăмăллă пулнăшăн лагерьсене хупнă. Çурçĕр Италире фашистсене хирĕç тунă демонстрацисенче салтаксем демонстрантсене пеме килĕшмен. Толмино хулинче акăлчансем Сицилие пырса аннă тенĕ хыпар сарăлнă. Çав хула гарнизонĕнчи салтаксем вара хăйсен хĕçпăшалĕсене пăрахнă та, вăрçă пĕтессине саламласа, урамсене тухнă. Итали çарĕнче тата пĕтĕм çĕршывра Италие пĕтес патне илсе пынă Муссолини пирки тарăхасси ÿснĕçемĕн ÿссе пырать.

Июнĕн 18-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Июнĕн 18-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле фронтсенче нимĕнле паллă улшăнусем те пулман.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пĕр çаçăн снайперĕсем юлашки 4 кун хушшинче 100 ытла нимĕç салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Пĕр участокра тăшманăн разведка тăвакан отрячĕ пирĕн оборона ăшне кĕрсе кайма хăтланнă. Тăшман разведчикĕсене старши лейтенант Бедняков юлташ командир пулса ертсе пыракан ротăн боевой хуралĕ вăхăтра палăртнă. Пăшалсемпе пулеметсенчен персе, гитлеровецсене пысăк çухатусем тÿстерсе те каялла ывăтса янă.

* * *

Севск районĕнче пирĕн подразделенисем разведка тунă тата гитлеровецсен пĕр ротине çити пĕтерсе тăкнă. Совет зенитчикĕсем 2 нимĕç самолетне персе ÿкернĕ. Пĕр çаçăн летчикĕсем нимĕç автоколоннине атакăланă та тĕрлĕ грузсем тиенĕ 14 автомашинăна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пирĕн разведка тăвакан отрядсем тăшманăн темиçе дзотне вĕсенче пулнă гитлеровецсемпе пĕрлех сирпĕнтерсе янă. Лейтенант Парпеев юлташ командир пулса ертсе пыракан разведчиксен группи, тăшман хушшине кĕрсе кайса, нимĕç автоматчикĕсен ротипе çапăçма пуçланă. Пирĕн разведчиксем 40 гитлеровеца вĕлернĕ, вара хăйсен чаçне ăнăçлăнах таврăннă.

* * *

Ленинград фронтĕнче артиллерипе миномет подразделенийĕсем нимĕç пехотин 2 ротине çити çапаласа янă е пĕтерсе тăкнă, 12 дзота, 4 блиндаж тата тăшманăн 3 наблюдательнăй пунктне аркатса тăкнă. Пирĕн снайперсем 80 гитлеровеца вĕлернĕ.

Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе, 7 нимĕç бомбардировщикне ÿкернĕ.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнчи пĕр участокра пирĕн подразделени меллĕ высота çинче çирĕпленсе ларнă. Тăшмана атакăланă. Совет боецĕсем нимĕç траншейисене вăркăнса кĕнĕ те вĕсене йышăнса илнĕ. Штык вĕççĕн пынă çапăçура темиçе вуншар гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Тăшман хăйĕн малтанхи позицийĕсене каялла илес тесе темиçе хут та хăтланнă, анчах унăн ĕçĕ ăнман.

* * *

Ленинград облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен карательнăй экспедицине хирĕç пынă çапăçура 120 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Партизансем 2 миномет, 4 пулемет, 14 автомат, 29 винтовка тата патронсем нумай тытса илнĕ. Ленинград партизанĕсен темиçе отрячĕ 7 кун хушшинче тăшманăн 18 эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Темиçе паровоз тата войскăсемпе çар хатĕрĕ турттаракан нумай вагона пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 211-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен Хĕрлĕ Çар енне куçнă салтак Фридрих М. çапла каласа панă: «Эпĕ çамрăк салтак, фронта та нумай пулмасть лекрĕм. Россияна килнĕ çул çинчех мана вăрçă хăрушлăхĕсене тÿсме тиврĕ. Минск районĕнче пирĕн маршевăй батальон партизансем тапăнассинчен хăраса çĕрĕпех çапăçăва хатĕр тăчĕ. Брянск патне çитес умĕн эпĕ ларса пыракан поезд мина çине пырса кĕчĕ. Темиçе вуншар метр чугунçул арканчĕ. Ятарласа уйăрнă команда çĕрĕпех çул тÿрлетрĕ. Эпир, командир хушнă тăрăх оборона тытса тăтăмăр. Брянскра вырăс авиацийĕ пырса тапăннă вăхăтра бомбăсем вокзал çине тата чугунçул эшелонĕсем çине ÿкрĕç. Пит нумай салтак пĕтрĕ».

* * *

Копенгагенра Дани патриочĕсем хими заводне вут тĕртнĕ. Çав заводăн тĕп цехĕсем пурте çунса кайнă. Патриотсен хĕçпăшаллă группи Тендер станцинчи депона сирпĕнтернĕ. Бомбăсем çурăлнине пула Ольборгри цемент заводне нумай сиенленĕ.

Пирĕн авиаци тăшман аэродромĕсене тапăнни

Июнĕн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиацин пысăк вăйĕсем тăшман аэродромĕсене тапăннă. Бомбăсем пăрахнипе пула тăшман самолечĕсем ларнă вырăнсенче тата горючипе боеприпассен склачĕсем вырнаснă вырăнсенче 100 пушара яхăн тухнă. Пирĕн летчиксем нимĕçсен самолечĕсемпе ангарĕсем çуннине асăрханă. Вăйлă взрывсем пулнине курнă. Пирĕн 2 самолет хăйсен базисене таврăнман.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕнче

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ республикăри вăрман хатĕрлев организацийĕсем чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе кăçалхи май—июнь уйăхĕсенче ситтелĕксĕр ĕçленĕ тесе палăртнă.

Чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлеме Оборонăн Государственный Комитечĕ панă задание пĕтĕмĕшпех пурнăçлас шутпа, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ **чугунçул валли вутă хатĕрлесе турттармалли çурçулхи плана пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе кăçалхи июнĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 1-мĕшне çитиччен фронтовой декадник ирттерме йышăннă.**

Райисполкомсен председателĕсемпе ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсене чугунçул валли вутă хатĕрлесе турттармалли задание кашни район тата вăрман хатĕрлев предприятийĕ тăрăх пурнăçа кĕртме кирлĕ мероприятисене пурне те йышăнма хушнă. Çавăнпа та ĕнтĕ çурçулхи задание кăçалхи июлĕн 1-мĕшĕччен тултармашкăн вăрман ĕçне сынсемпе лашасем ситтелĕклĕ тараймалла.

Главлесснабăн тата вăрман хатĕрлев предприятийĕсен хатĕрленĕ вутта июлĕн 1-мĕшĕччен НКПС-а пĕтĕмĕшпех турттарса памалла.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Наркомместпром предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи май уйăхĕнчи итогĕсем

Çак кунсенче Чăваш АССР Совнаркомĕ Наркомместпром предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи май уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухрĕ. Ăмăртура Сĕнтĕрвăрри райпромкомбинчĕ, Канашри горпромкомбинат тата Тăвай райпромкомбиначĕ çĕнтернĕ тесе йышăннă.

Сĕнтĕрвăрринчи райпромкомбинат май уйăхĕнче плана пĕтĕм продукци енĕпе 148,4 процент, ширпотреб енĕпе 128,3 процент, 1943 çулхи иккĕмĕш квартал планне 101,5 процент пурнăçланă.

Совнарком май уйăхĕнчи социализмлă ăмăртăвăн итогĕсем тăрăх Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Сĕнтĕрвăрри райпромкомбиначĕн аллинчех (управляющийĕ Титов юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Маклашкин юлташ) хăварма йышăнса, райпромкомбинатăн социализмлă ăмăртура палăрнă работникĕсене премилеме 15.000 тенкĕ укçа памалла тунă. Çак укçаран райсовет исполком председателĕн вырăнти промышленность енĕпе ĕçлекен заместительне Соколов юлташа 1.000 тенкĕ парса премилеме йышăннă.

Канаш горпромкомбиначĕ май уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци тата ширпотреб енĕпе 171,8 процент пурнăçланă. Апрель уйăхĕпе танлаштарсан, продукци кăларассине 27 процент ÿстернĕ. 1943 çулхи иккĕмĕш квартал планне 107 процент тултарнă. Канашри горпромкомбината (управляющийĕ Шлапак юлташ, горсовет исполкомĕн председателĕ Белоусов юлташ) социализмлă ăмăртура палăрнă работникĕсене премилеме 10 пин тенкĕ укçа пама йышăннă.

Тăвай райпромкомбиначĕ май уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци тата ширпотреб енĕпе 185,7 процент пурнăçланă. Планра палăртнисĕр пуçне 70 мăшăр çăматă туса хатĕрленĕ, урана тăхăнмалли япаласем 200 мăшăр юсанă. Апрель уйăхĕпе танлаштарсан, продукци кăларассине 16 процент ÿстернĕ. 1943 çулхи иккĕмĕш квартал планне 152 процент пурнăçланă.

Тăвай райпромкомбинатне (управляющийĕ Игнатьев юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Федоров юлташ) социализмлă ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 3 пин тенкĕ укçа памалла тунă.

Совнарком предприятисен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе Наркомместпром енчен практикăллă пулăшу панă çĕрте уйрăмах палăрнă работниксене премилеме Наркомместпром аллине 2 пин тенкĕ укçа уйăрса пама йышăннă.

Совнарком май уйăхĕнче Элĕк, Комсомольски, Советски, Сĕнтĕр, Шăхасан, Шупашкар (хула) тата Елчĕк райпромкомбиначĕсем ĕçе лайăхлатнине палăртрĕ.

Çавăн пекех Совнарком май уйăхĕнче Улатăр, Йĕпреç, Красноармейски, Хĕрлĕ Чутай, Кувакино, Октябрьски, Первомайски, Пăрачкав, Вăрмар, Шăмăршă, Шупашкар (район), Чкаловски тата Етĕрне райпромкомбиначĕсем начар ĕçленине палăртса хăварчĕ.

Асăннă районсен райсовет исполком председателĕсем промкомбинатсен ĕçĕсене начар ертсе пынă, Чăваш АССР Совнакомĕ вĕсене промкомбинатсен ĕçне тĕпренех вăйлатма татăклă мерăсем йышăнма хушса хăварчĕ, июнь уйăхĕн ĕç планне пĕр пăркаланмасăр пурнăçлама хушрĕ.

Кунсăр пуçне Совнарком райсовет исполкомĕсен председателĕсене çакна асăрхаттарать: райпромкомбинатсем çитес уйăхсенче вайăх ĕçлесси пуринчен ытларах тĕсем валли чĕртавар, кирлĕ материалсем тупса панинчен кил т. Çавăнпа та колхозсенче уборка ĕçĕ пуçланиччен пур райпромкомбинатсем валли те виçĕ уйăхран кая мар ĕçлемелĕх чĕртавар хатĕрлесе хумалла, вĕсене ĕç вăйĕ тупса парас тата производство ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе куллен пулăшса пымалла.

Шупашкар хула Совечĕн сессийĕ

Июнĕн 17-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çар Çуртĕнче ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн XX-мĕш сессийĕ пулчĕ. Сесси икĕ ыйту сÿтсе яврĕ: хулари пурăнмалли çуртсемпе коммуналлă хуçалăха лайăхлатмалли ĕçсем çинчен тата организациллĕ ыйтусем.

Пĕрремĕш ыйтупа хула Совет исполкомĕн председателĕ Аникин юлташ доклад турĕ.

— Хулара пурăнакансен йышĕ тата промышленность предприятийĕсен хисепĕ ÿссех пырать, — тет докладчик. — Анчах пурăнмалли çуртйĕрсем коммуналлă хуçалăх предприятийĕсем ĕççыннисен ыйтăвĕсемпе промышленноçăн нушисене тивĕçтерейменççĕ. Чăнах та, хулана юсаса йĕркелес тата ĕççыннисен пурнăç условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе хăшпĕр ĕçсене туса ирттернĕ. Электростанци, 1941 çултипе танлаштарсан, икĕ хут ытларах çутă парса тăма тытăнчĕ. Водопроводсен тăршшĕ 5 километр чÿхлĕ ÿсрĕ.

Вăрçă кунĕсенче Советсен Çуртĕ умĕнчи площаде, Ленинградски Урама асфальт сарса тухнă. Калинин, Кадыков, Октябрьски урамсенчи кĕперсене çĕнĕрен тунă. Пристань патне пымалли çула тăваççĕ. Хула общественноçĕн вăйĕпе 10.000 тĕп йывăç лартнă. Хулана тасатас тĕлĕшпе те хăшпĕр ĕçсене туса ирттернĕ.

Анчах хула хуçалăхĕн ĕçĕнче питех те пысăк çитменлĕхсем пур. Электростанци хула ĕççыннийĕсен нушисене тивĕçтермелĕх çутă парса тăраймасть-ха. Пурăнмалли çуртсем тăвас тата юсас ĕç сÿрĕк пулса пырать. Урамсене хытарса тухас ĕç те çителĕксĕр. Çырмасем ишĕлеççĕ, вĕсене çирĕплетес тĕлĕшпе нимĕн те туман. Обществăллă мунча йĕркеллĕ ĕçлемест.

Хула Совечĕн коммуналлă хуçалăх тĕлĕшпе ĕçлекен яланлăх комиссин председателĕ Симонова юлташ содоклад турĕ.

Пренире 7 çын тухса каларĕ.

Депутат Наумов юлташ (хула Совечĕн сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен яланлăх комиссин председателĕ) хулара санитарипе тасалăхшăн кĕрешес ĕç мĕнле пулса пыни çинчен чарăнса тăчĕ.

Лещинский юлташ (Çăкăр пĕçерекен комбинат) горисполком пурăнмалли çуртсен строительствине, хулари çулсене юсас тата вутă хатĕрлесе турттарас ĕçе кирлĕ пек ертсе пыманнине кăтартса пачĕ.

Депутат Золотников юлташ пурăнмалли çуртсемпе коммуналлă хуçалăха лайăхлатас ĕçе хулари ĕççыннисем тата предприятисемпе учрежденисен руководителĕсем начар хутшăннине палăртрĕ.

Сесси хула хуçалăхĕнчи ытти йĕркесĕрлĕхсене те палăртрĕ. Пурăнмалли çуртйĕрсене тата коммуналлă хуçалăха лайăхлатмалли ĕçсем çинчен конкретлă решени йышăнчĕ. Вăл решенире пурăнмалли çуртсемпе коммуналлă хуçалăх предприятисене çĕнĕрен тумалли, юсамалли, хулана илемлетмелли, электростанципе водопровод ĕçне лайăхлатмалли, çак ĕçсене тунă чухне хулари общественноçа активлăн явăçтармалли т. ыт. ĕçсене палăртнă.

Сесси хула Совет исполком председателĕн çар сыннисен çемьисене государство пулăшăвне парас тата вĕсен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе ĕçлекен заместителĕ пулма Е. Е. Кузнецова юлташа, хула Совет исполкомĕн вырăнти промышленность пайĕн заведующийĕ пулма Н. И. Ластушкина юлташа çирĕплетрĕ.

Колхоз агрономĕ

Ун чухне колхозра сум çумлана вăхăт пулнă, колхозниксем иртен пуçласа каçчен хирте ĕçленĕ. Июнь хĕвелĕ калама çук хăмăллăн çутатса уйри тырăсене сарăлтарнă, колхозниксене савăнтарнă.

Вăл кун çанталăк ăшă та лăпкă тăнă. Хутран-ситрен кăна çӳлĕк çил килсе тинĕс пек сарăлса выртакан тулă, пăри, сĕлĕ калчисем çийĕн хум кăларса кайнă, анчах часах лăпланнă.

Çум çумлакан хĕрарăмсем патне пĕр çитĕннĕ хĕр тата колхоз председателĕпе бригадирсем çитсе чарăннă.

— Сывă-и?

— Пурне те салам!—сăмах пуçарнă хальхи килнĕ хĕр. Хăйĕн вырăнта тăма пĕлмен куçĕсем пĕрре умри тырпулсене, тепре колхозниксем çине пăхса илнĕ. Колхоз председателĕпе бригадирсем ăна умри участок хăш бригадăн пулнине, миçе квадратлă гектар йышăннине каласа панă, вăл хăйĕн пĕчĕк блокночĕ çине темскер кĕскен çырса пынă.

— Ку пирĕн колхоз агрономĕ пулать ĕнтĕ, Вера Александровна Клементьева,—тесе паллаштарнă юлашкинчен колхоз председателĕ Кузьма Трофимович. Унтан каллех вĕсем малалла утнă, тепĕр бригада ĕçленĕ çĕрелле кайнă.

Çапла Вера Александровна «Богатырь» колхоза килнĕ кунах колхозпа паллашнă, колхозăн уйхирне тухнă. Малтанхи кунах колхоз кăçал миçе гектар, мĕнле культура акса хăварнине, хăш бригадăн хăш тĕлте мĕнле тырпул пулнине пĕлнĕ.

Кун иртнĕ те çĕр иртнĕ, колхозри ĕç нумайланнăçемĕн нумайланса пынă, уĕсемсемпе пĕрле çитменлĕхсем те тухнă, йывăрлăхсем те умрах тăнă. Вăйпитти арçынсем кашни бригадăрах чакса пынă, нимĕç оккупанчĕсемпе çапăçма фронта туха-туха кайнă.

— «Куç хăрать, ал хăрамасть» теççĕ чăвашсем. Вера Александровна колхоз умĕнчи йывăрлăхсене, уйри тырпула пухса кĕртес ĕçри чăрмавсене курнă пулин те, хăраса ӳкмен. Колхоз ĕçĕ çине хăюллăн пăхнă.

— Пĕччен мар, колхозра парти членĕ, Чăваш АССР Верховный Совечĕн депутачĕ Иван Евдокимов пур, комсомолецсем пур,—тесе шухăшланă вăл ăшĕнче.—Ĕçлес-ха, ĕçлес, намăс курас мар, фронтри пек ĕçлес, фронт мĕн ыйтнине пурнăçлас,—тенĕ.

Ĕçе чĕререн парăннă колхоз агрономĕ. Ыйхи те унăн шăпчăк ыйхи пек пулнă. Вăл хĕвел ансан тахçанрах çывăрма выртнă та хĕвел тухиччен нихçан та çывăрман. Яланах пуринчен кайран выртнă, пуринчен малтан тăнă.

Çавăнпала çав колхоз иртнĕ çул пур ĕçре те малта пулнă. Утине çулма тухсан хĕрсе çулнă, вăхăтра çулса пĕтерсе вăхăтра пухса капансене хывнă. Тырăрине вырма тухсан хĕрсе вырнă, вăхăтра вырса пĕтерсе государствăна та вăхăтра леçсе панă.

Пĕр сăмахпа каласан, «Богатырь» колхоз иртнĕ çул пур ĕçпе те хăйпеле ăмăртăва тухнă «13 лет Октября» колхозран малта пынă.

1943 çулхи хĕл. Иртнĕ çулхи тырпулсене çапса тирпейлесе пĕтерни хыççăнах кăçалхи çуракине хатĕрленсе кĕтсе илес ĕçсем пуçланнă. Кун хыççăн кун çуракине çывхартнă.

Коммунист Иван Евдокимов (вăлах колхоз бригадирĕ) тата комсомолецсем пĕрле пухăнса ларса, çитес çуракине хатĕрленесси çинчен каласнă. Çул пуçламăшĕнчех план туса хунă.

Вăхăта сая ямасăр вăрлăхсене тасатнă, ялхуçалăх машинисене тĕрĕсленĕ, юсама кирлĕ машинăсене юсанă. Уя тислĕк кăларнă. Вăрлăхсене малтанах аюма юрăхлăпе юрăхлă маррине пĕлме шăтарса пăхнă. Сахал-и ĕç çуракине пуха-с умĕн? Питĕ нумай. Çавăнпа «Вера Александровна çывăрма пĕлмест, çулла та, хĕлле те, унăн пурĕ-пĕрех ĕç нумай» теççĕ колхозниксем.

Анчах çуракинче унăн кунта пулма май килмерĕ, чирленĕ пирки больницăра выртма тиврĕ.

Нумай пулмасть Вера Александровна юсанса тухнă хыççăн ку колхоза татах çитрĕ. Çитнĕ-çитменех колхоз çуракине мĕнле ирттернине ыйтса пĕлчĕ. Каллех колхоз хирне тухса кайрĕ. Унтан килсен: «Çумсем тухаççĕ, халех сум çумлама пуçлатпăр, уборкăна хĕрсех хатĕрленмелле ĕнтĕ», терĕ.

ИВ. МАЛГАЙ.

Çĕрпӳ районĕ.

Тыра вырма тухма хатерленмеççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, июнĕн 17-мĕшĕ. (Телефонпа). Кĕрхи тырăсем кĕçех шăркана лараççĕ, тырă вырма тухас вăхăт çывхарса килет. Анчах районри чылай колхозсем уборкăна хатĕрленме тытăнманпа пĕрех. Ку ĕçе ялсовечĕсем пачах та çителĕксĕр ертсе пыраççĕ.

Янкас ялсоветĕнче 4 колхоз. Пĕр колхозĕ те уборкăна хатĕрленме тытăнман. «Волга» колхозра (председателĕ И. Ванифатьев) уборка умĕнхи уйхир ĕçĕсем питех те юлса пыраççĕ. Тырпулсене çумкуракĕ пусса илнĕ. Анчах пĕр гектар та çумламан. Колхозри ĕçсене тивĕçлипе организацилемен. Çавăнпа ĕçсем сӳрĕк пулса пыраççĕ.

Колхозниксем халĕ овощехранилище тăваççĕ. Ĕçлеме пултаракан 101 çынран 80—90 çын çеç ĕçе тухаççĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕ тата ĕçе ячĕшĕн çеç тăваççĕ.

Колхоз председателĕ шанă нарядсем нихçан та ăнăçлăн пурнăçланни çук. Июнĕн 16-мĕшĕнче овощехранилище тума 30 çынна хушнă, анчах 18-шĕ çеç ĕçе тухнă.

Çум çумлас ĕçре колхоза шкул ачисемпе пионерсем пысăк пулăшу пама тивĕçлĕ. Анчах шун çинчен колхоз председателĕ те, шкул директорĕ те шутласа та пăхман.

Колхоз тырă вырмалли машинăсене—3 жнейкăпа пĕр косилкăна иртнĕ çул вырнă хыççăн тасалмасăрах сарайне кĕртсе лартнă. Вĕсене алă тĕкĕнмен-ха. Вĕсем тулăхнă. Пĕр жнейкин шатунĕ тата платформи çĕмрĕк, кĕреплисем хуçăк. Косилкăна юрăхсăра тухнă тесе, кăçал юсама та шутламаççĕ. Тĕрĕссипе унпа усă курма пулать.

Тырă вырмалли машинăсем йĕркеллĕ ĕçлесси вĕсене лайăх юсанинчен, машина пайĕсене типтерлĕ тытса усранинчен нумай килет. Ку колхозра иртнĕ çул жнейка çĕççисене кăларнă та тасатмасăрах таянтарса хунă. Çĕçĕсем халĕ шукăрăлнă, тутăхнă.

Колхоз тимĕрçи Кузнецов юлташ çураки пĕтнĕренпех тулли нагрузкăпа ĕçлемен. «Бригадирсем темпĕн машинăсене юсама илсе килмеççĕ-ха. Вĕсен сӳрĕклĕхне пула ĕç юлса пырать»,—тет вăл. Колхозăн машинăсемпе тырă выракан кадрсем хатĕр мар. Колхоз ку тĕлĕшпе нимĕн те туман.

«Волга» колхозра машинăна хирĕçле шухăш палăрать. Çавăнпа унта ялхуçалăх машинисене хисеплемеççĕ, типтерсĕр тыткалаççĕ. 3 молотилкăран пĕри кăна юсавлă, иккĕшĕн чĕнĕсем çук. Сортировка «Клейтон» тата сеялкăсем ăçта килчĕ унта, çумăр айĕнчех шӳсе лараççĕ. Вĕсен пайĕсене унта-кунта пăрахса пĕтернĕ.

Колхозри çитменлĕхсене ялсовет исполкомĕ тата унăн председателĕ Яковлев юлташ лайăх пĕлсе тăрать. Анчах темĕн пирки ку таранччен тӳссе пурăнать. Яковлев колхозсене конкретно ертсе пыма тăрăшмасть. «Колхозсем уйхир ĕçĕсене хăйсемех туса пыраççĕ, эпир кашни кунах сводкăсем пухатпăр. Пирĕн ĕç те çав анчах», тет вăл. Колхозсем уборкăна хатĕрленес тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен ялсовет исполкомĕн ларăвĕнче пачах сӳтсе-явман.

ВКП(б) Обкомĕн XV-мĕш пленумĕ уборкăна кĕске срокра хатĕрленсе çитме хушрĕ. ВКП(б) Обком пленумĕн решенийĕсене пурнăçлассишĕн тивĕçлипе кĕрешмелле.

С. ШАДИН.

(«Чăваш Коммуни» корр.).

Примерлă ĕçлеççĕ

ВАРМАР. («Чăваш Коммуни» корр.). Çĕн Мăнтăрти «Красные Шептахи» колхоз (председателĕ А. Вишнев юлташ) кăçал сураки ĕçне иртнĕ çулхинчен малтанрах тата пысăк пахалăхпа вĕçлерĕ, пĕрчĕллĕ тырăсене 7 кун хушшинче акса пĕтерчĕ, çураки планне 106 процент тултарчĕ.

Агротехника мероприятийĕсене тĕрĕс пурнăçласа, колхоз кăçал çуртыррисене пĕтĕмĕшпех машинăпа акса хăварчĕ, вăрлăхсене 50 процент ытла яровизацилесе, имçамсемпе сиплесе акрĕ. Калчасем тикĕс, хӳхĕм шăтса тухрĕç.

— Вăйлă тырпулшăн кĕрешсе, кăçал гектартан 18-шар центнер тĕштырă пухса илме ĕмĕт пур. Калчасем хӳхĕм ӳснипе колхозниксем савăнса ĕçлеме тытăнчĕç, — тет колхоз председателĕ Вишнев юлташ.

Ку колхоз иртнĕ çулта та уйхир ĕçне аван туса пынă. Çавăнпа та иртнĕ çулта колхозниксем кашни ĕçкунĕ пуçне 2,755 килограмм тĕштырă, икшер килограмм çĕрулми, купăста тата ытти тĕрлĕ пахча-çимĕçсем туса илнĕ.

Кăçал вĕсем тата ытларах тырпул туса илессишĕн кĕрешеççĕ. Акара нихçанхи пек мар хастарлăн ĕçлерĕç. Пĕр-пĕрне ăмăртса ĕçлесе, хăйсен нормисене ирттерсе тултарса пычĕç. Анна Никифорова, Екатерина Гурьева сухаçăсем кулленех нормăпа пĕр гектар сухалас вырăнне 1,30—1,35 гектар сухаларĕç. Сӳрелекен Василий Афанасьев юлташ, пĕччен 4 лашапа ĕçлесе, кулленех нормăна 350—500 процент таран тултарса пычĕ. Вăл кунне 3 гектар сӳрелес вырăнне 6—8 гектар сӳрелерĕ, уйрăм кунсенче 9—9,5 гектар сӳрелерĕ. Тырă акакансем Федор Павловпа Николай Андреев юлташсем те нормăна 150 процент тултарса ĕçлерĕç. Вĕсем 4 гектар вырăнне кашни кунах 6—7 гектар тырă акрĕç. 12 çулхи Василий Кузнецов, сурамничо сухаçă пулса ĕçлесе, хăйĕн нормине 130—140 процент тултарса пычĕ. 7 кун хушшинче 29 ĕçкунĕ ытла ĕçлесе пурĕ.

Халĕ кунта сĕртме тăваççĕ, уя тислĕк кăлараççĕ, тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленеççĕ. Çак кунсенче колхозниксем уя 2,050 лав ытла тислĕк кăларчĕç. Паянхи куна 100 гектар ытла ирхи сĕртме тунă.

Тырпул пухса кĕртме хатĕрленнĕ май, колхоз тимĕрçи П. Константинов юлташ çак кунсенче 3 жнейка, 1 молотилка юсаса лартрĕ тата пĕр жнейкăпа пĕр молотилкăна çак кунсенчех юсаса пĕтерет. Колхозниксем 52 урапа юсаса лартрĕç, 525 михĕ, 2 шăналăк, 60 вĕрен, 24 кĕреплеллĕ çава туса хатĕрлерĕç. Итемсене тасатрĕç.

Паянхи куна çурхи тырăсене пĕтĕмĕшпех пĕрремĕш хут çумласа тухнă, халĕ иккĕмĕш хут çумлама тытăнчĕç.

* * *

«Атнаш» колхозра та стахановла ĕçлекенсен йышĕ ӳссех пырать. Кăçал колхозниксем, Сталин юлташăн приказĕпе хавхаланса, колхоз производствинче активлăн ĕçлеççĕ. Фронта вĕсем колхозра тухăçлăн ĕçлесе пулăшаççĕ. Пилĕк уйăх хушшинче Михаил Морозов 149 ĕçкунĕ, Варвара Евдокимова 146 ĕçкунĕ, Серафима Федотова 182 ĕçкунĕ, В. Федорова 139 ĕçкунĕ тунă. Çавăн пекех С. Андреева, С. Малов юлташсем те 136—140-шер ĕçкунĕ тунă. Паянхи куна колхозра ĕçкунĕсен минимумне тултарман колхозник пачах çук.

В. ВЕСЕЛОВ.

Çулсем юсамалли уйăхлăх

Çулйĕр уйăхлăхĕн графикне пурнăçлар

Юлашки кунсенче çулйĕр ĕçне колхозниксемпе колхозницăсем массăллăн тухма тытăнчĕç. Комсомольскипе Первомайски районсем малта пыраççĕ. Комсомольски районра 237 çын, 73 лаша шĕр тăтăлмасăр ĕçлеççĕ. Кулленхи ĕç графикне ытлашшипех тултараççĕ. Çак кунсенче Сĕнтĕрвăрри районĕ те çулйĕр уйăхлăхне организованно тытăнчĕ. Кунта июнĕн 17-мĕшĕ тĕлне çулйĕр ĕçĕнче 153 çын, 67 лаша ĕçленĕ.

Анчах хăшпĕр районсем çак ĕçе халĕ те тивĕçлипе тытăнман-ха. Пăрачкав, Хĕрлĕ Чутай, Элĕк районĕсем уйăхлăхăн графикне 20 процента яхăн çеç пурнăçланă. Пăрачкав районĕн (ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Кукушкин юлташ) çулйĕр ĕçĕнче 239 çын, 116 лаша ĕçлемелле шулсан, паянхи куна 56 çын та 22 лаша кăна ĕçлет.

Çулйĕр уйăхлăхĕ кирлĕ пек пулса пыманни районри руководительсемпе ялсовет председателĕсем ку ĕç çине çиелтен пăхнинчен килет.

Ялсовет председателĕсемпе колхоз председателĕсен уйăхлăх графикне пурнăçлассишĕн çине тăрса ĕçлемеле.

Хастарлăн ĕçлеççĕ

КАЛИНИНО. Июнĕн 18-мĕшĕ. (Телефонпа). Çавалкассинчи „Çутталла" колхоз çулйĕр уйăхлăхне массăллăн тухса, кулленхи задание ытлашшипех пурнăçласа пырать. Çулйĕр ĕçне çурран тата лашапа ĕçлеме кирлĕ чухлĕ ĕç вăйĕ кăларнă. Унта ĕçлекенсем валли колхоз апат-çимĕç вăхăтра тăрататать Т. Николаев юлташ бригади кулленхи графика 150—200 процента çити тултарса ĕçлет. Ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартнăшăн çав бригада Чăваш АССР доруправленийĕнчен премии илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Ушлавари „Броневик" колхоз та çулйĕр ĕçĕнче аван ĕçлесе пырать. В. Мясников юлташ бригади кулленхи задание яланах ăнăçлăн пурнăçласа пынăшăн доруправленирен иккĕмĕш премии илчĕ. Çак бригадăра ĕçлекен Сапожников, Федорова, Волкова, Макарова юлташсене 3-шер метр пусма-тавар пачĕç.

Район июнĕн 14-мĕшĕ тĕлне çулйĕр ĕçĕнче лашапа ĕçлессине 100 процент, пĕтĕмĕшпе илсен, çак ĕçе 60 процент пурнăçланă.

Çакăнпа пĕрлех районра çулйĕр ĕçĕнче юлса пыракан колхозсем те пур-ха. „Дружба" тата Сталин ячĕпе тăракан колхозсем çулйĕр ĕçне паянхи куна та тытăнман.

В. Зайцев

Çулйĕр ĕçне хакламан руководительсем

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Уйрăм колхозсем çулйĕр уйăхлăхĕнче лайăх примерсем кăтартса ĕçлеççĕ. Çакă вăл уйрăмах ялсовет тата колхоз руководителĕсем çулйĕр ыйтăвĕ çине кирлĕ пек çавăрăнса пăхнинчен килет. Кăмашари «1-ое Мая», Улхашри Ворошилов ячĕпе тăракан тата ытти колхозсенче çул çинче ĕçлеме ятарласах бригадăсем организациленĕ, вăл бригадăсен членĕсем çул çинче ир пуçласа каçченех ĕçлеççĕ. Çавна пула асăннă колхозсем çулйĕр уйăхлăхĕнче тума панă ĕçсен графикне ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Мыслецри «Ударник» колхоз, акă çулйĕр юсамалли плана тултарчĕ те ĕнтĕ. Бреченри «Большевик», Молкачкинари «Молодая сила» колхозсем те чылай ĕçсем енĕпе плана тултарчĕç.

Анчах, пĕтĕмĕшпе илсен, район, çулйĕр строительствинче çителĕксĕр ĕçлет-ха, вăл нихăçан кун та графика пурнăçласа пыраймасть. Çакă вăл чăн малтанах ĕç вăйĕ çителĕксĕр пулнинчен килет. Халыхи вăхăтра çулйĕр ĕçĕ вис̆ĕ сĕрте пырать. Анчах нихăçан сĕрте те ĕç вăйĕ планпа палăртнă чухлĕ çук.

Уйрăм колхоз руководителĕсем çулйĕр ĕçĕ çине çиелтен пăхаççĕ. Çул çинче ĕç вăйĕ çителĕксĕр пулни те ĕнтĕ, паллах, вĕсенчен килет. Вăрманти колхозсен ялсовечĕ (председателĕ Леонтьева) паян кунччен те уйăхлăха хутшăнман. Ку ялсоветĕнчи «Красный Октябрь» колхоз (председателĕ Кондратьев юлташ) «ĕлкĕрĕпĕр-ха», тесе ларать. Буденный ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Максимов та çавăн пек «шухăшпа» пурăнать. Вăл çынсене яма мар, бригада та организацилемен.

«Красноармеец» колхоз районри чи пысăк колхоз шутланать. План тăрăх унăн çак уйăхра 150 кубометр вăрман касса хатĕрлемелле, 150 кубометр хăйăр турттармалла т. ыт. те. Анчах колхоз плана çуррине те тултарман-ха, мĕншĕн тесен çул çинче кулленех 32 çын çурран, 19 лаша ĕçлес вырăнне 5 çын çеç ĕçлет. Вĕсем те пулсан ĕç кунĕпе туллин усă курмаççĕ, хăшпĕр кун çур кун ĕçлеççĕ те киле пăрахса каяççĕ.

Х. ЛИСИН.

Çамрăксем хĕрӳллĕ ĕçре

Шупашкарти чăлха çыхакан фабрика коллективĕ июнь уйăхĕнчи производство планне 10 кун малтан пурнăçлама обязательство илнĕччĕ. Çав обязательствăна чыслăн пурнăçлассишĕн халь кашни рабочипе работница пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлессине татах вăйлатрĕç. Фабрикăра ĕçлекенсенчен пурте пекех çамрăк хĕрачасем. Вĕсем вăрçă хушнă пек ĕçлесе пыраççĕ. Акă, çамрăк хĕрачасем Ф. Хасинская кулленхи нормăна 125—130 процент, Карпеева 115 процент, Безрукова 120—125 процент, Литвиновăпа Старостина юлташсем кашни кунах задание 125—130 процента çити тултараççĕ.

— Пирĕн çамрăксем нимĕнле йывăрлăхран та хăраса тăмаççĕ. Ĕçлеме те, йывăрлăхсене сирсе яма та хăнăхса çитрĕç, — тет завод директорĕ Елена Яковлевна Богуславская, цехри çамрăксем çине кăтартса.

Çамрăксен ĕçлес хастарлăхĕ çав тери пысăк. Тăрăшса ĕçлени, кашни кунхи задание ытларах тултарса пыни çĕршыва пулăшни пулса тăнине вĕсем лайăх ăнланаççĕ.

— Вăрçă вăхăтĕнче хăйĕн заданине те тултарса ĕçлеймен çын—вăл тăван çĕршывшăн тăрăшман çын пекех шутланать. Халь наянланса, нăйкăшса лармалли вăхăт мар,—тет фабрикăна халь çеç ĕçлеме пынă çамрăк хĕрача А. Иванова юлташ.

Çамрăксем ăмăртура пĕр-пĕринчен юлас мар тесе, кашни минутăна шута илсе ĕçлеççĕ. Ăмăртăва анлăн сарса яни ĕç тухăçлăхне нумай хăпартрĕ. Иртнĕ уйăхсенче плана шăп çеç тултарса пынă работницăсем халĕ заданине 120—130 процент тултарса ĕçлеççĕ. Вĕсен шутне Андреева, Л. Егорова, Л. Каменецкая, А. Беззубова, М. Антонова юлташсем кĕреççĕ.

Фабрика июнĕн 10-мĕшĕ тĕлне производство программине 120 процент ытла пурнăçларĕ. Çакă вăл коллектив тăрăшса ĕçленин результачĕ пулса тăрать.

Кăçал фабрика рабочисен пурнăç условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе подсобнăй хуçалăх организацилерĕ. Майăн 31-мĕшĕ тĕлне 31,2 гектар çĕр çине тĕрлĕрен пахча-çимĕç культурисем лартса хăварчĕ. Вăл шутран çĕрулми 10,5 гектар, купăста 1,5 гектар, сухан 1,2 гектар, пăрса 6 гектар акса хăварнă.

— Кăçал хамăр хуçалăхрах çителĕклĕ пахча-çимĕç туса илетпĕр, — тет подсобнăй хуçалăхăн директорĕ Белько юлташ.

Ф. МАЛЫШКИН.

Пирĕн землякСем

Тăван тусшăн тавăрни

Паян çамрăк казакăн пурнăçĕ вăхăтсăр татăлчĕ. Пуля унăн куçне шăтарса тухрĕ. Çапăçу хирĕнче палланнă çывăх юлташ яланах Тăван çĕршывне аса илетчĕ, çутă ĕмĕтпе ĕмĕтленетчĕ.

— Ылханлă вăрçă пĕтĕ. Каллех лăпкă кунсем пулĕç. Сĕтеклĕ арбуз пиçĕ...—тетчĕ.

Вăл вилнĕ чухне те пирĕнтен çак ĕмĕтпех уйăрăлчĕ. Унăн çамрăк пурнăçне тăшман «куккукĕ» татрĕ.

— Хура çăхана тупса пĕтермелле,—приказ пачĕ командир.—Сунгатуллин, ку ĕçе сана хушатăп.

—...Сунгатуллин командир приказне пурнăçлама тухса кайрĕ.

Сунгатуллин çак ĕçе тума мĕн тери кансĕррине лайăх пĕлсе тăнă: тăшман снайперĕ меллĕ пытаннă, кунсăр пуçне вăл эпир ăçтине, мĕн тунине лайăх курса тăнă. Çавăнпа Сунгатуллин тавралăха тимлĕн сăнаса, асăрханса шунă.

Çил артиллери харăс пенин шавне тата автоматсем çатăртатнă сасса илсе килнĕ. Сывлăшра—бензинпа сунăк шăрши. Сулахайра—вăрман. Сунгатуллин тăшман «куккукĕ» унти йывăççенчен пĕрин çинче вырнаçса ларнă тесе шутласа пăхнă. Анчах юлашкинчен илтĕннĕ пăшал сасси тăшман снайперĕ çывăхри лутра йывăççем хушшинчех пулма тивĕçлине систерчĕ. Сунгатуллин çав йывăççем еннелле шунă. Йывăç айĕнче, çĕр çине тăрăнтарнă турат тĕлĕнче, каска курăннă. Сунгатуллин ун çине тĕллес шутпа винтовкине çĕкленĕ, çав вăхăтра каскăран инçе мар тепĕр хура мĕлкене асăрханă. Сунгатуллин: «Фриц чее мĕн, анчах мана патак çине тăхăнтарнă каскăпа улталаймăн» тесе хăй ăшĕнче кулса илнĕ.

Çав вăхăтра Сунгатуллинăн сулахай ури пĕçерсе кайнă: «Ку мĕнле тамаша тата? Вилнисем перекен марччĕ-çке». Çук. Пăшал сасси вĕтлĕх енчен илтĕннĕ. Иккĕленмелли çук, унта тăшманăн тепĕр снайперĕ ларнă. Сунгатуллин, суран ыратнине çĕнтерсе, айккинелле шума хăтланнă. Тăшман «куккукĕ», пирĕн боец кусине асăрхаса пулас, тепĕр пуля кăларса янă. Çакăн хыççăн çеç Сунгатуллин «куккук» йăвине тимлĕн асăрханă. Пирĕн боец персе янă, «куккук» пуçĕпе аялалла усăнса анса турата çакланнă та çаплипех çакăнса юлнă.

Сунгатуллин суранне çыхса çыхнă. Суранĕ вăйлă çурнă пулин те, вăл хăмăллă пулнă, мĕншĕн тесен командир приказне пурнăçланă, тăван тусшăн — çамрăк казакшăн тавăрнă.

Çакăн пек ĕнтĕ Елчĕк районĕнчи Сăрьял шкулĕн директорĕ пулса ĕçленĕ пирĕн землякăн Гумер Сунгатуллинăн çапăçури ĕçĕсенчен пĕри.

Старши сержант И. ТЕНЮШЕВ.

ТАСС опровержениĕ

Шведсен Гитлер майлă çырса тăракан «Нюа Даглигт Аллехандa» ятлă хаçачĕ çакăн пек хыпар пичетлесе кăларнă: Стокгольмра нумай пулмасть СССР-пе Германи хушшинче килĕшӳ синчен калаçусем пулса иртнĕ; Çав калаçусем вара территори ыйтăвĕсем пирки ахалех пĕтсе ларнă пулать.

ТАСС çав шĕретĕнех ăссăр та кулăшла хыпара сирсе яма полномочи илнĕ.

Ют çĕршывсенче

Совет партизанĕсем оккупантсен сехрине хăпартаççĕ

ФАШИСТЛА ХАÇАТ ЙЫШĂННИ

СТАМБУЛ, июнĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Итали фашисчĕсен «Коррьере Делла сера» хаçачĕ хăйĕн Берлинри корреспонденчĕн статьине пичетленĕ. Çар обозревателĕн Отто Шульц генералăн заявленийĕ çине кăтартса, автор çапла калать: Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче нимĕç войскисен тылĕнчи партизанла кĕрешӳ «калама çук сарăлса кайнă», совет партизанĕсен кĕрешĕвĕ хăйĕн анлăшĕпе историри ку таранччен паллă пулнă партизанла вăрçăсенчен пуринчен те иртгерет, тет. Партизан отрячĕсем, çырать автор, вĕсенче «ĕçе çав тери парăннă гражданосем» тăнипе тата вĕсем вырăнти условисемпе ăнăçлăн усă курма пĕлнипе хăрушă. «Çавăнпа та,—хуйхăрса пĕлтерет фашистла корреспондент,—партизансем совет армине çапăçăвăн татса паракан вăтăчĕсенче вăйлăн пулăшаççĕ. Партизансен отрячĕсем салтаксен уйрăм групписене тапăннипе, тылра транспорт ĕçне пăснипе, складсемпе обозсене тапăннипе чарăнса тăмаççĕ, час-часах вĕсем тактикăллă тата стратегиллĕ пысăк операцисемех туса ирттереççĕ».

Партизан отрячĕсене кирлĕ апат-çимĕç тата ытти кирлĕ хатĕрсем парса тăрассине халăх пулăшмасăр тăвас çуккине автор пытарма пултараймасть. «Халăх партизансене пулăшнине тата вăл вĕсемпе çыхăнса ĕçленине йышăнмасăр тăни,—çырать корреспондент, — йăнăш пулнă пулĕччĕ». Час-часах халăх, нимĕçсен хĕсмăшалĕсене вăрласа, вĕсене партизансене парать, тесе çырать автор.

Юлашкинчен фашистла корреспондент Шульц генералăн заявленине аса илет. Германи командованийĕ малтан партизансене хирĕç полицин ятарласа тунă чаçĕсемпе çеç усă курса кĕрешнĕ пулсан, халĕ партизансене хирĕç войско чаçĕсене яма тивет, ку çеç те мар, вĕсене хирĕç лайăх вĕрентнĕ çамрăк салтаксене яма тивет, тенĕ Шульц.

ГЕРМАНИ ХАЛĂХĔ РУРТАН ТАРАТЬ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). „Нью-Йорк Таймс" хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Германи халăхĕ Рурпа Рейн облаçĕсенчи хуласенчен тарать, мĕншĕн тесен унти хуласене союзниксен авиацийĕ хытă тапăнать. Унтан тухса тарнă халăх пĕр вырăнтан тепĕр вырăна тĕлли-паллисĕр куçса çӳрет, мĕншĕн тесен вĕсене ăçта та пулин пурăнма вырнаçтарас тесе нимĕнле мерăсем те йышăнмаççĕ.

Хаçат çырнă тăрăх, Рурти хуласенче нумайĕшĕнче пушарпа кĕрешес ĕç питех те вăйсăрланса кайнă. Гиммлер хушнипе пĕчĕкрех хуласенче пушар командисенче ĕçлеме 17—40 çулти хĕрарăмсене пурне те мобилизациленĕ. Апла пулин те, пушар командисем пур пушарсене те сӳнтерсе çитерейменççĕ, мĕншĕн тесен пушарсем питĕ нумай тухса тăраççĕ. Хаçат çапла çырать: Дюссельдорф пек промышленноçлă пысăк центрсенче те пушар командисем çителĕклĕ мар. Çавăнпа вара пушарсем тăвакан сиен питех те пысăк. Сăмахран, Дюссельдорфа июнĕн 11-мĕшĕнче тапăннă хыççăн тухнă пушарсем, пушарпа кĕрешмелли средствăсем çитмен, пирки, июнĕн 15-мĕшĕччен пынă.

АНГЛИ ТИНĔС-ÇАР ФЛОЧĔН ÇУРÇĔР АФРИКĂРИ КАМПАНИ ВĂХАТĔНЧИ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, июнĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Çурçĕр Африкăри кампани вăхăтĕнче Англи карапĕсемпе подводнăй лодкисем тĕнĕл держависен 117 суднине шыва путарнă, вĕсен пĕтĕм тоннажĕ 290 пин тонна пулнă. Самолетсем (вăл шута тинĕс авиацийĕ те кĕрет) 898 судно путарнă, вĕсен пĕтĕм тоннажĕ 270 пин тонна пулнă. Унсăр пуçне тата аманнатсен подводнăй лодкисем тăшманăн 30 суднине сиенленĕ, вĕсен пĕтĕм тоннажĕ 140 пин тонна, самолетсем 42 суднăна сиенленĕ, кусен пĕтĕм тоннажĕ 200 пин тонна. Çапла вара мĕншурĕ тăшманăн 278 суднине путарнă е сиенленĕ вĕсен пĕтĕм тоннажĕ 900 пин тонна пулать.

Пĕлтерӳре малалла çапла калана: Эль-Аламейна патĕнчи çапăçу пуçланнăранпа Англи флочĕ 8-мĕш арми валли пĕр миллион тонна ытла груз турттарса пырса панă.

ЯПОНИ ПАРЛАМЕНЧĔН ЧРЕЗВЫЧАЙНĂЙ СЕССИЙĔ УÇĂЛНИ

ТОКИО, июнĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Домэй Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Япони парламенчĕн чрезвычайнăй сессийĕ уçăлнă. Сессире премьер-министр Тодзио сăмах тухса каланă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, июнĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин бомбардировка тăвакан самолечĕсем Кельнри тата Рейн облаçĕн ытти пункчĕсенчи тĕрлĕ объектсене тапăннă.

Истребительнăй авиаци сăнаса вĕçсе çӳренĕ чух Голландипе Бельгире транспорт объекчĕсене тата ытти объектсене те атакăланă. Çак мĕншур операцисенчен 15 самолет каялла таврăнман.

Кельна çак юлашки хут тапăнни ăна 115-мĕш хут тапăнни пулса тăрать. Германи хулисенчен пуринчен ытла çав Кельн хулине час-часах сывлăшран пырса тапăнаççĕ.

Халĕ паллă пулнă тăрăх, Оберхаузена июнĕн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тапăннă чухне Германи чугунçулĕсен хуçалăхне пысăк сиен кӳнĕ. Темиçе пысăк бомба чугунçулсен главнăй стрелкисем хушшинче çурăлса кайнă. Боеприпассем тиенĕ икĕ поезд сирпĕнсе кайнă. Вагонсемпе платформăсем нумай пĕтнĕ. Чугунçулпа куçса çӳресси пĕтĕм районĕпех чарăнса ларнă.

Вăтаçĕр тинĕс бассейнĕнче тăшманăн парăспа çӳрекен вис̆ĕ суднине путарнă. Ытти чухне авиаци сăнаса тата разведка туса кăна вĕçсе çӳренĕ.

ТУРЦИПЕ СИРИ ЧИККИНЕ ХУПНĂ

ЛОНДОН, июнĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Турципе Сири чиккине хупнă, ăна пограничниксен пысăк отрячĕсем хӳтĕлесе тăраççĕ. Англи влаçĕсем хăйсем йышăннă мерăсем çинчен официальнăй йĕркепе Турцин генеральнăй штабне тата Турци правительствине пĕлтернĕ.

Фронтри юмор

ТĔРĔС САМАХ

— Обер-лейтенант фон Шульц пире кашни çапăçу умĕнчех, ку юлашки çапăçу пулать, тет.

— Командир тĕрĕс калать, мĕншĕн тесен пирĕнтен нумайĕшĕшĕн кашни çапăçăвах юлашки çапăçу пулса тăрать.

(«Фрунзевец»).

ДОКЛАД ТУНĂ ЧУХ

— Безобрази ку, господин обер-лейтенант! Сирĕн авиачасть пĕр эрне хушшинче 100 самолет çухатрĕ. Хăçан чарăнăр эсир самолетсене пĕтерме?

— Чарăнтăмăр ĕнтĕ.

— ?!

— Паян çăври юлашки пилĕк «Хеншель» базăна таврăнмарĕç.

(«На разгром врага»).

Пĕлтерӳ

Июнĕн 20-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, Н. К. Крупская ячĕпе тăракан садра «Пирĕн союзниксем» ятлă циклпа лекци пулать. Лекци темми: «Великобритания».

Лекцие лектор М. Л. Юдин юлташ вулать.

ВКП(б) Горкомĕн Парткабинечĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Хусанти В. И. Ульянов-Ленин ячĕпе тăракан Государство Университечĕ 1943—44-мĕш вĕренӳ çулĕ валли студентсем илесси çинчен пĕлтерет.

Студентсене çак факультетсен 1-мĕш курсне илеççĕ: 1) физикăпа математика, 2) хими, 3) биологи, 4) геологипе тăпрасен, 5) историпе филологи, 6) географи факультачĕсен 1-мĕш курсне. Пур факультетсенче те 5 çул вĕренмелле.

Университета вĕренме кĕмелли условисем ытти аслă шкулсене вĕренме кĕмеллисем пекех.

Студентсем валли Университетăн общижити тата столовăй пур.

Заявленипе документсене çак адреспа ямалла: Хусан хули, Чернышевский урамĕ, 18-мĕш номерлĕ çурт Госуниверситет.

2—1

Ялан ĕçлеме рабочи-грузчиксем (арçынсем те, хĕрарăмсем те) кирлĕ.

Общежити пур. Столовăйра апат çитереççĕ е йышăннă норма тăрăх паек пăраççĕ.

Çак адреспа мйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Калинин урамĕ, 51-мĕш номерлĕ çурт, Снабжени канторĕ.

Чăвашсен государство селекци станцине главнăй бухгалтер кирлĕ. Ĕçукçи—уйăхне 600 тенкĕ. Хваттер тата апат-çимĕç пулать.

Адрес çапла: Çĕрпӳ хули, Госселекстанци.

Майăн 30-мĕшĕнче каçхине Вăрнар леспромхозĕнче колхоз лаши çухалнă. Тĕсĕ хăмăр, çамки çинче çăлтăр пур, çӳллĕшĕнчен пăхсан—вăтам лаша, 1936-мĕш çулта çуралнă.

Пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Чăваш АССР, Шупашкар районĕ, Кусна ялĕ, «Кормилец» колхоз правленине.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

№ 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2. Ф. 6. 53 84 п. л.